**Ĕçе тăваканĕ:** Иванова Валентина Михайловна, Канаш районĕн Сухайкасси тĕп шкулĕнче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен.

**Предмет:** Чăваш чĕлхи(урокăн тĕп шăнăрĕ чăваш чĕлхи пĕлĕвĕ çинче никĕсленнĕ)

**Урок теми:** Япала ячĕсем (пĕтĕмлетӳ).

**Урок тĕсĕ**: вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетмелли хутăш урок (чăваш, вырăс, акăлчан чĕлхисене пĕрлештернĕ урок – интегрированный обобщающий урок чувашского, русского и английского языков)

**Ачасен ӳсĕмĕ:** 6-мĕш класс

**Шкул:** чăваш шкулĕ

**Урок эпиграфĕ:** Пĕр чĕлхе – пĕр ăс, икĕ чĕлхе – икĕ ăс, виçĕ чĕлхе – виçĕ ăс. (И.Я.Яковлев)

**Урок тĕллевĕсем:**

**1.Харкамлăх (личностные)** (Права, тĕллев, тупсăм, мораль)

а) тăван чĕлхе чăваш халăхĕн пурлăхĕ пулнине, Чăваш Республикинче вырăс чĕлхипе тан патшалăх чĕлхи пулнине ăнланни;

ă) тĕрлĕ чĕлхе пĕлни усăллă пулнине ăша хывни, пуплеве куллен кун аталантарма тăрăшни;

б) тĕрлĕ халăх чĕлхине хисеплеме вĕренни, халăхсем хушшинчи туслăх пĕлтерĕшне ăнланни;

в) харпăр хăй пĕлĕвне хаклама пĕлни.

**2.Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем (метапредметные)** (йĕркелӳ, хутшăну, информаци)

а) тăван чĕлхене вĕренсе пухнă пĕлӳпе тата хăнăхупа ытти предмета (тăван мар чĕлхесене: вырăс, акăлчан чĕлхисене) вĕренме усă курни, танлаштарусем тума пĕлни;

ă) темăпа çыхăннă кирлĕ материала суйласа илсе ĕçлеме хăнăхни.

б) пур пек пĕлӳпе тата хăнăхусемпе усă курса ăнлавсене хак пама, пĕтĕмлетӳсем тума пултарни.

**3. Предмета вĕреннин результачĕсем (предметные)**

а) япала ячĕсем çинчен вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси;

ă) япала ячĕсемпе пуплевре тата çырура тĕрĕс усă курассине аталантарасси;

б) пĕччен, мăшăрпа е ушкăнпа тумалли вĕренӳ ĕçĕн тĕллевне, йĕркине ăнланса илни, ĕç результатне каласа е çырса кăтартма пултарни.

**Урокра усă курнă технологисем:** учитель сăмахĕ, туслăх темăпа калаçу ирттерни, ансăр-анлă ыйтусем, фишбоун, клоуз-тест, пĕччен, мăшăрпа, ушкăнпа карточкăсемпе ĕçлени, танлаштаруллă таблица.

**ИКТ технологийĕ** – мультимедиа презентацийĕ.

**Культурăсен çыхăнăвĕ:** япала ячĕсем çинчен чăваш, вырăс тата акăлчан чĕлхисен урокĕсенче илнĕ пĕлĕве танлаштаруллă пĕтĕмлетсе çирĕплетни.

**Урокра кирлĕ хатĕрсем:** компьютер, проектор, вăрттăн çыру шифрĕ (чăваш алфавитĕнчи сас паллисен йĕрки), карточкăсем, фишбоунăн хатĕр схеми, „Туслăх” юрă сăмахĕсем (чăвашла, акăлчанла, вырăсла), маркер, магнитсем.

## УРОК ЮХĂМĔ

*Урок пуçланиччен кашни парта çине кирлĕ танлаштару таблицисем, карточкăсем, фишбоун схемисем хурса тухатăп.*

**I . Урока йĕркелени.**

1) Виçĕ чĕлхепе сывлăх сунса класа йĕркелени, ачасен кăмăлне çĕклени, хастар пулма хавхалантарни.

**Чăваш чĕлхи вĕрентекен:** Ырă кун пултăр, ачасем! Эпĕ сире курма питĕ хавас! Кăмăлăрсем аван-и?

***Вĕренекенсем:*** Аван!

**Вырăс чĕлхи вĕрентекен**: Добрый день, ребята! *(ачасен хуравĕ).*Я тоже очень рада видеть вас и желаю вам сегодня плодотворной работы.

**Акăлчан чĕлхи вĕрентекен:** Good evening, children! Nice to meet you.

**Ч.Ч. вĕрентекен:** Маттурсем! Эпир паян урока виçĕ чĕлхе вĕрентекен пĕрле пуçтарăнтăмăр. Мĕншĕн-ши? *(ачасен хуравĕсем)*Апла сирĕн паян уйрăмахтимлĕ пулмалла. Сире яланхиллех маттур пулма тимлĕх, тăрăшулăх сунатăп.

**II. Тĕп тапхăр умĕнхи ĕçсем:**

1) **Урокра мĕн çинчен калаçасса прогнозлани.**

**Ч.Ч. вĕрентекен:** Паянхи урок темине пĕлес тесен сирĕн, ачасем, çак вăрттăн çырăва вулас пулать. Мĕн тесе çырнă-ши унта? Ваттисем калашле, кашни япалан хăйĕн вырăнĕ. Ку числосем мĕне пĕлтерет çĕ-ши?

***1 слайд***: **37, 19, 1, 15, 1      37, 29, 9, 21, 7, 16 *(19, 9, 23, 9, 16, 15, 7, 23, 25)***

***Вĕренекенсем:***Ку числосем чăваш алфавитĕнчисас паллисен вырăнне пĕлтереççĕ.*(ачасем вăрттăн çырăва вулаççĕ)*

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| **А а** | **Ă ă** | **Б б** | **В в** | **Г г** | **Д д** | **Е е** | **Ё ё** |
| **Ĕ ĕ** | **Ж ж** | **З з** | **И и** | **Й й** | **К к** | **Л л** | **М м** |
| **Н н** | **О о** | **П п** | **Р р** | **С с** | **Ç ç** | **Т т** | **У у** |
| **Ӳ ӳ** | **Ф ф** | **Х х** | **Ц ц** | **Ч ч** | **Ш ш** | **Щ щ** | **Ъ ъ** |
| **Ы ы** | **Ь ь** | **Э э** | **Ю ю** | **Я я** | | | |

2) **Урок темипе тĕллевне палăртни.**

**Ч.Ч. вĕрентекен:** Маттурсем. Мĕн тесе çырнă-ши кунта?

***Вĕренекенсем:*** Япала ячĕсем (пĕтĕмлетӳ).

**Ч.Ч. вĕрентекен:** Питĕ аван. Паянхи урокăн эпиграфĕ мĕн пĕлтерет-ха пире, паллашар:„Пĕр чĕлхе – пĕр ăс, икĕ чĕлхе – икĕ ăс, виçĕ чĕлхе – виçĕ ăс”. (И.Я.Яковлев)

*Вĕренекенсен хуравĕсем*

**Ч.Ч. вĕрентекен:** Апла пулсан паянхи урокăн тĕллевĕсене палăртар.

*Вĕренекенсем:*1. япала ячĕсем çинчен чăвашла, вырăсла, акăлчанла вĕреннине аса илесси, танлаштарасси; 2.  япала ячĕсемпе пуплевре тата çырура тĕрĕс усă курассине аталантарасси.
**Ч.Ч. вĕрентекен:** Маттурсем!

**<u>III.Урокăн тĕп тапхăрĕ (2 *слайд*)</u>**:

**Ч.Ч. вĕрентекен:** Ачасем, паянхи урокра эпир япала ячĕ çинчен вĕреннине аса илнĕ май çак фишбоун (пулă шăмми) текен схемăна тултарса пырăпăр.Вăл кашнин сĕтелĕ çинчех пур.




**Ч.Ч. вĕрентекен:** Япала ячĕсем. Мĕн вăл япала ячĕ? *(ачасен хуравĕ: япалана пĕлтерекен кам? мĕн? ыйтура тăракан пуплев пайĕ)*

(3слайд тăрăх): Ӳкерчĕкри япала ячĕсен ыйтăвне калăр: **Кам е мĕн ыйтура?**




*(Ачасем хуравлаççĕ)*

**Ч.Ч. вĕрентекен** юлашки япала ячĕпе çыхăнтарса *ансăр тата анлă ыйтусемпе туслăх çинчен кĕске калаçу урттерет*:

- Мĕн вăл туслăх?
- Эсир класра пĕр-пĕринпе мĕнле пурăнатăр?
- Тĕрлĕ халăхăн туслă пурăнмалла-и? *(шухăша халăхсен хушшинче туслăх пулмалли патне илсе çитермелле)*
- Туслăх çинчен мĕнле ваттисен сăмахĕсем пĕлетĕр?

**Ч.Ч. вĕрентекен:** Маттурсем! Урокра та паян эсир туслă ĕçлĕр. Çапла вара, кам? тата мĕн? ыйтури япала ячĕсем çинчен мĕнле пĕтĕмлетӳ тăвăпăр?

***Вĕренекенсем:*** Чăваш чĕлхинче КАМ? ыйтура çынна пĕлтерекен япала ячĕсем кăна пулаççĕ, ытти япала ячĕсен ыйтăвĕ –  МĔН?

**Ч.Ч. вĕрентекен:** Питĕ аван. Вырăс чĕлхинче çак япала ячĕсен ыйтăвĕсем мĕнле-ши?

**Вырăс чĕлхи вĕрентекен (4 слайд):** *(„Кто? или Что?“ слайдри ӳкерчĕксемпе ĕçлет, туслăх пĕлтерĕшĕ çинчен кĕскен каласа хаварать, ачасем ваттисен сăмахĕсене аса илеççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ).*

***Вĕренекенсем:*** В русском языке на вопрос КТО? отвечают одушевлённые существительные, а на вопрос ЧТО? – неодушевлённые.

**Акăлчан чĕлхи вĕрентекен (5 слайд):**  *(„Who? (ху) или What?( вот)“ слайдпа ĕçлет. Ачасем ӳкерчĕкри япала ячĕсене пĕлтерекен сăмахсене, вĕсен ыйтăвĕсене калаççĕ, пĕтĕмлетӳ тăваççĕ).*

***Вĕренекенсем:*** В английском языке на вопрос Who? отвечают одушевлённые существительные, а на вопрос What? – неодушевлённые, включая животных, если не известен их пол.

**<u>(Уйрăммăн, мăшăрпа карточкăсемпе ĕçлени)</u>**

**Ч.Ч. вĕрентекен*(6 слайд):*** Япала ячĕсем мĕне пĕлтереççĕ? Пĕлтерĕшĕ енчен вĕсем мĕнлисем пулаççĕ?

***Вĕренекенсем:*** япала ячĕсем япалана пĕлтереççĕ, тулли тата тулли мар пĕлтерĕшлĕ, пайăр е пайăр мар ятсем пулаççĕ.

**Ч.Ч. вĕрентекен:** Маттурсем! Халĕ 1№ карточкăсенче панă ĕçе тăвăпăр.

*7 слайд: <u>1-мĕш ĕç: Панă предложенисенче тулли мар пĕлтерĕшлĕ япала ячĕсене тупăр та пĕр йĕрпе аялтан туртăр. (ай, аяк, ăш (ĕ), варă (варринче), вĕç (вĕçне), пуçне, çи, çум, тăрă, ум, хыç).</u>*

1. Çывăх юлташ <u>çумĕнче</u> эпĕ хама лăпкă туятăп. 2. Эпир урокра туслăх <u>çинчен</u> калаçу ирттертĕмĕр.3. Ура <u>айĕнче</u> шăннă юр кăчăртатать. 4. Хĕвел пĕлĕтсем <u>хыçне</u> пытанчĕ. 5. Тăрă шывăн <u>ăшĕнче</u> кăвак пĕлĕт явăнать.

*(Вĕренекенсем ĕçе кашни харпăр хăй тĕллĕн тăваççĕ, вуласа хуравлаççĕ).*

**Ч.Ч. вĕрентекен:** Аван. Пайăр тата пайăр мар япала ячĕсене те аса илер.

*8 слайд: <u>2-мĕш ĕç: Мăшăрпа тумалли ĕç (Панă предложенисенчен пайăр тата пайăр мар ятсене таблицăна çырса тултарарăр. Вуланă чух пĕри пайăр ята тепри пайăр мар ята вуласа хуравлăр, пайăр ята мĕнле çырмаллине ăнлантарăр)</u>*

1. Эпир «Тантăш» хаçата юратсах вулатпăр. 2. Петĕр пичче темĕн те пĕлет. 3. Пирĕн ял çумĕнчи Улпут вăрманĕнче юман нумай ӳсет. 4. Улттăмĕшсем «Хăравçă мулкач» юптарăва пăхмасăр пĕлеççĕ. 5. Александр Артемьев çыравçă «Хисеп Палли» ордена тивĕçнĕ.6. Çавал шывĕ çуркунне пăтранчăк.

| Пайăр ятсем | Пайăр мар ятсем |
|---|---|
| «Тантăш» (кавычкăра, пысăк сас паллипе пуçласа çыратпăр) | хаçат |
| Петĕр | пичче |
| … | … |

**Вырăс чĕлхи вĕрентекен:** Ребята, а теперь вспомним как пишутся имена существительное в русском языке? Какие имена существительные пишутся с большой буквы *(собственные имена).* Какие имена существительные называются нарицательными? *(ответ учащихся).*

**Акăлчан чĕлхи вĕрентекен:** Так же в английском языке: I will read you words, we must say, you must name nouns in English (Я прочитаю вам слова, вы должны будете сказать, какие существительные являются нарицательными, а какие собственными): apple, Mary, mouse, sweet, Moscow, chesse, London.

**Ч.Ч. вĕрентекен*(9 слайд)*:** Япала ячĕсен пулăвĕ çинчен аса илер. Пулавĕ енчен япала ячĕсене мĕнле ушкăнлама пулать? Тĕслĕхрен: тус – туслăх.
***Вĕренекенсен хуравĕ:****пĕрремĕшле тата иккĕмĕшле яавла ячĕсем.*
**Ч.Ч. вĕрентекен:** Маттурсем. Каланине 4№ карточкăри ĕçе туса çирĕплетер.
***10 слайд:*** *<u>3-мĕш ĕç: Панă предложенисенче иккĕмĕшле япала ячĕсене тупăр, вĕсен пулăвне ăнлантарăр.</u>*

1. Пĕрлĕхре – вăй. 2. Тус-тăван пуррипе çын телейлĕ. 3. Туслăх çынна çунат хушать. 4. Улми улмуççинчен аякка ÿкмест. 5. Литкружок пире хушма пĕлÿ илме пулăшать.

**Чăваш, вырăс тата акăлчан чĕлхи вĕрентекенĕсем (11 *слайд)*:** (ачасене виçĕ чĕлхере япала ячĕсен пулăвĕ çинчен вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетме, танлаштарма пулăшаççĕ)

| **Япала ячĕсен пулăвĕ<br>Способы словообразования имён существительных** | | |
|---|---|---|
| **чăваш чĕлхинче** | **вырăс чĕлхинче** | **акăлчан чĕлхинче** |
| **1. Япала ячĕ, паллă ячĕсем, глагол çумне аффикссем хушăннипе: пулăÇĂ, хурăнЛĂХ; таса ЛĂХ, тарăнĂШ; калаВ, çырУ, вĕрКĔЧ, савăнĂÇ…** | **1. Суффиксальный: помощНИК, учиТЕЛЬ** | **1.Суфффиксальный: afriend – friendship, abrother – brotherhood** |
| **<u>2. Историтапхăрĕнчесăмахсемкĕскелсепулнипе:</u> улмуççи (улмайывăççи, çăраççи (çăрауççи)** | **<u>2. Сложение:</u> жизнелюб (жизнь, любить)** | **<u>2. Сложениедвухсуществительных:</u> a classroom ( class + room), a girl-friend – girl, friend** |
| **3. Япалаячĕсенемăшăрлатнипе: сĕтел-пукан (сĕтел, пукан), атте-анне – (атте, анне), çĕр-шыв (çĕр, шыв);<br>4. Вырăсчĕлхинчихутлă сăмахсенекалькăланипе: литкружок, электрохунар, аэроçуна…** | **3. Приставочный: (дно – поддон)<br>4. Приставочно-суффиксальный: попутчик, подберёзовик<br>5. Бессуффиксный: (зелёный – зелень)** | **-------** |

**IV. КАНУ САМАНЧĔ (12 *слайд):***
Халĕ шăппăн çĕкленетпĕр,
Алла пилĕк çине хуратпăр,
Енчен енне пăрăнкалатпăр.
Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă
Пĕр-пĕрне хирĕç тăратпăр,
Ырă сунса ал паратпăр,
Хирĕç пăхса йăл кулатпăр.
*КАМ? ыйтура тăракан япала ятне каласан алăсене çÿлелле çĕклетпĕр,*

*МĔН? ыйтура тăракан япала ятне каласан малалла тăсатпăр.*
Кăмăллăн калле ларатпăр,
Малалла ĕçе тăсатпăр.

**Ч.Ч. вĕрентекен (13 слайд):** Фишбоун схемине малалла тултарса пырăпăр. Япала ячĕсем мĕн-мĕн тăрăх улшăнаççĕ?
***Вĕренекенсен хуравĕсем***

**Ч.Ч. вĕрентекен:** Маттурсем, чăн та морфологи тĕлĕшĕнчен япала ячĕсем ытти сăмахсенчен падеж, хисеп, сăпат тăрăх улшăннипе уйрăлса тăраççĕ.
***14 слайд** – 4-мĕш ĕç: Паллă тунă япала ячĕсем мĕнле сăпатра (пур пулсан), хисепре, падежра пулнине ăнлантарăр.*
1. **Ушкăнпа ĕçĕ** те ăнать, **апачĕ** те анать. 2. Шанчăклă **тусăнхакĕ** çук.3. **Тусу** пултăр хăвăнтан маттур. 4. **Юлташсăр çын тымарсăрйывăç**пекех. 5. **Чĕлхем**, санпа **тĕнче уççи** тытатăп, шухăшлама вĕрентрĕн эс мана! 6. Тĕрлĕ **чĕлхе** пĕлни **çыннăн ăс-хакăлне** пуянлатать.
***Вĕренекенсен хуравĕсем***

Малалла вырăс тата акăлчан чĕлхи вĕрентекенсем ĕçлеттереççĕ

| ***Найдите существительные и определите падеж, число и род.*** | ***Найдите существительные и определите падеж, число.*** |
|---|---|
| Если с другом вышел в путь,<br>Веселей дорога,<br>Без друзей меня чуть-чуть,<br>А с друзьями – много. | 1. I have got a friend.<br>2. My friend's name is Vladik.<br>3. Vladik and I are good friends.<br>4. Our friendship lasts five years. |

**Ч.Ч. вĕрентекен:** (15 слайд тăрăх вĕренекенсем чăваш, вырăс, акăлчан чĕлхисенче япала ячĕсем сăпат, хисеп, падеж тăрăх улшăннине танлаштарса пĕтĕмлетӳ тăваççĕ).
**Чăваш, вырăс тата акăлчан чĕлхи вĕрентекенĕсем** ***(16-17 слайд тăрăх):*** Предложенире япала ячĕсем мĕнле член пулнине вĕренекенсем панă чăвашла вырăсла, акăлчанла предложенисенче тупаççĕ, танлаштарса пĕтĕмлетӳ тăваççĕ)

**V. Пĕтĕмлетӳ тапхăрĕ – ачасен ăнланăвĕпе хăнăхăвне çирĕплетни**

**Ч.Ч. вĕрентекен (18 слайд):** Маттурсем! Çапла вара, чăваш чĕлхинче япала ячĕсем предложенире пур член та пулма пултараççĕ. Ачасем, эпир сирĕнпе урокра пĕрле ĕçлесе фишбоун схемине тултарса пĕтернĕпе пĕрех. Атьăр пĕрле пĕтĕмлетсе çирĕплетер. (вĕренекенсем фишбоун схеми тăрăх япала ячĕ çинчен мĕн пĕлнине каласа пĕтĕмлетеççĕ)




**<u>VI тапхăр. Рефлекси.</u>** Вĕренекенсемяпала ячĕ вăл – пуплев пайĕ пулнине палăртаççĕ. Вырăс тата акăлчан чĕлхинчи пĕр пеклĕхсемпе уйрăмлăхсене каласа тухаççĕ).

**<u>VII тапхăр. Киле ĕç пани (19 слайд)</u>**

(суйласа илсе тумалли пултарулăх ĕçĕсем):

1. *Юлташ* сăмахпа синквейн çырăр;
2. *Тусăм, юлташăр, тусĕсене* япала ячĕсене морфологи тĕлĕшĕнчен тишкерĕр.
3. *«Манăн çывăх юлташăм»* темăпа калав çырăр.

**<u>VIII тапхăр.</u>** Урока пĕтĕмлетни, ачасем ĕçленине хаклани.

**Ч.Ч. вĕрентекен:**

– Эсир паян урокра туслă ĕçлени мана питĕ килĕшрĕ. Маттурсем.

– Мĕн çĕннине пĕлтĕмĕр ку урокра?

– Хăвăр ĕçе, ыттисен ĕçне мĕнле паллăпа хаклатăр?(Ушкăнри ачасем пĕр-пĕрин пĕлĕвне хакласа тивĕçлĕ палла кăтартакан карточкăна çĕклесе пĕр-пĕрне кăтартаççĕ, унтан хăйсен ĕçне хаклакан паллăсене кăтартаççĕ)

– Аван. Эпĕ те сирĕн паллăсемпе килĕшетĕп. Эсир туслă ĕçленипе ĕç ăнса пычĕ. Сире малашне те туслă пулма сунатăп. *(20 слайд)*Туслăх юррин йĕркисемпе виçĕ чĕлхепе паллашса паянхи урока вĕçлетпĕр. *(кĕвĕ ярса юрлаттарсан аванрах).*

– Ялан туслă пулар-и?

Туслăх юрри юрлар-и?

*Туслăх юрри – Песня о дружбе – A song about friendship*
Дружба крепкая не сломается,
Не расклеится от дождей и вьюг.
Тус инкекре прахмĕ, ытлашшиех ыйтмĕ,
Ак мĕнле вăл чăннипех юлташ тени.
He never asks too many questions
That's what it means to be a faithful, a true friend.